«Пăлъхар» ятлă хаçат кăларса тăма ирĕк ыйтать. Тĕп хуларан вара çакнашкал ответ килет: «Шалти ĕçсен министерствин управляющийĕ господин «Пăлъхар» ятпа чăвашла хаçат кăларма ыйтнине тивĕçтерме май çук тесе шутлать». Çакă хăех патша тытăмĕ чăвашсем культура патне туртăннине пур майсемпе те пусарса пынине яр-уççăн кăтартать.

Мал ĕмĕтлĕ интеллигенци çыннисем, пусмăр тӳссе тĕттĕмлĕхре асапланакан халăха мĕнпе те пулин пулăшас ĕмĕтпе çунатланса, чăвашсем çинчен публицистика произведенийĕсем XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çырма пуçланă. Ку шута С. М. Михайлова, Н. И. Золотницкие, В. К. Магницкие, И. Я. Яковлева тата ытти хăшпĕр публицистсене кĕртмелле. Тĕпрен илсен, вĕсем чăваш халăх пурнăçĕ çинчен вырăсла çырнă, мĕншĕн тесен мĕн çырнине вырăс прессинче пичетлеме тивнĕ. Содержанийĕпе вара çак авторсен статйисене чăваш публицистикин произведенийĕсем темелле. Унта чăваш халăх пурнăçне кăтартнă, ăна хӳтĕленĕ, общество пурнăçĕнчи самаях пысăк ыйтусене ун майлă пулса сӳтсе явнă. Чăваш периодика пичечĕн малтанхи чечекĕ вара каярахпа — самана тапса, вĕресе тăнă, кивĕ тĕнчене ишĕлтерме тытăннă вăхăтра —вырăссен пĕрремĕш революцийĕ çулĕсенче çеçке çурать. Çакна К. Петров кĕнекинче документлă тĕрĕслĕхпе çырса кăтартнă.

Кунта вăл, чăваш журналистикин Октябрь революцийĕччченхи çул-йĕрне тишкернисĕр пуçне, тăван чĕлхепе хаçат жанрĕсем пуçланса кайса аталаннине çутатать. Чăваш публицистики жанрĕсен системи çуралса пуянланасси вырăс журналистикинчи пек мар, урăхларах йĕркеленнĕ. Вырăс публицистики ансаттинчен кăткăсси патне çул хывнă, çак аталану журналистика умĕнчи социаллă задачăсем анлăланнипе, вулакансен йышне ӳстерес тата вĕсене витĕм кӳрессине вăйлатас тĕллевсемпе çыхăннă. «Анчах чăваш журналистики пирки вара çакна калаймăн. Хаçат материалĕсене наци чĕлхипе çырса пичетлессин формисем аталанасси ансаттинчен кăткăсси патне мар, урăхла каласан, заметкăран корреспонденци, корреспонденцирен статья патне мар, урăхла пулса пынă. «Хыпар» хаçат тӳрех нумай тĕрлĕ жанрпа усă курать—ку ĕнтĕ вырăс журналистикин ĕç йĕрки тата пуян опычĕ витĕм кӳнинчен килнĕ»,—палăртать автор.

Кĕнеке виçĕ сыпăкран тăрать. Пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕнче çӳлерех кăтартнă ыйтусене тишкернĕ, юлашкинче малтанхи чăваш публицисчĕсен—Михаил Акимовăн, Тимофей Семеновăн (Тайăр Тимккин), Тимофей Николаевăн тата ытти хыпарçăсен ĕсталăхне пăхса тухнă. Çакна палăртса хăварар: вулакан кашни сыпăкрах çĕннине, халиччен пĕлменнине тупать. Сăмахран, «Паразитсем» произведение кам çырнине хаçатра кăтартман, тĕпчевçĕсем ун пирки тĕрлĕрен шутлатчĕç. Çĕнĕ кĕнекере ку произведени авторĕсем Т. Н. Николаевпа Т. С. Семенов пулнине палăртнă.

Кĕскен кĕнекери шайăрксем çинчен. Шел пулин те, автор чăваш публицистики хăçан тата епле пуçланса кайни, чăваш публицистикипе журналистики аталанăвĕн тапхăрĕсем çинчен пĕр сăмах та шарламасть. Автор çирĕплетнĕ тăрăх, Т. Николаевăн «Хальхи самана» статйине «публицистикăлăх витĕр каснă». Апла калани вырнаçуллă мар, мĕншĕн тесен ку статьяна обществăпа политикăн ун чухнехи çивĕч ыйтăвĕсемпе çырнă. Унта халăхăн революциллĕ кĕрешĕвĕ çинчен сăмах пырать. «Çук,—тет автор,— штык çине ларакан, тупăсем хушшинче тăракан хальхи бюрократи халăха нимĕн те параймасть.» («Хыпар» хаçат, 1906, октябрĕн 1-мĕшĕ.) Ун шучĕпе, ĕçхалăхĕн, пĕр канаш пулса, ирĕклĕхе хăйĕн кĕрешсе илмелле. Куратпăр: «Хальхи самана»—публицистика произведенийĕ. Публицистика произведенийĕнче публицистикăлăх, урăхла каласан, публицистикăна çывăх паллăсем шырама кирлĕ мар.

Чăваш халăх историйĕн хăшпĕр факчĕсем хăçан пулнине кĕнекере тĕрĕсех кăтартайман. И. Я. Яковлев чăвашсен оригиналлă алфавитне 1872 çулта мар, 1871 çулта туса хатĕрленĕ. «Краткий катехизис» кĕнекене Питĕрте 1788 çулта мар, 1800 çулта пичетлесе кăларнă.

Пĕтĕмĕшле илсен, К. К. Петровăн çĕнĕ кĕнеки хускатнă ыйтусене тĕрĕс те туллин çутатать. Вăл журналистсене, литература тĕпчевçисене, историксене, журналистикăна вĕренекенсене тата ытти вулакансене те усăллă пуласса шанас килет.

**И. ТЕНЮШЕВ,**
истори наукисен кандидачĕ.

# Мал ĕмĕтлĕ, сулмаклă

Порфирий Афанасьев. ПУРАНАТАП АТАЛ ХЕРРИНЧЕ. Сăвăсемпе поэмăсем. Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

Порфирий Афанасьев — хальхи чăваш поэзийĕнчи паллă ятсенчен пĕри. «Чун çути», кĕнекишĕн вăл Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине илме те тивĕçлĕ пулчĕ.

«Пуш параппан çапмашкăн хăнăхман...»
...Сăвва мĕнле эп ярăп ирĕке
Хăватсăр,
Чунсăр,
Сасăсăр,
Çунатсăр?»—

тет поэт «Пурăнатăп Атăл хĕрринче» кĕнекери «Чун пур-ха, тетĕп...» сăввинче çырас ĕсталăх, поэзи илемĕ пирки шухăша кайнă май.

Хăй сăмахне тытма шутланăн кашни хайлавах хăватне те, чунне те, сассине те, çунатне те пама тăрăшать вăл. «Килĕшет мана çак çăвăн ырă кăмалĕ» умсăвăран пуçласа юлашки страница таранах П. Афанасьев пире таран шухăшлă та эрешлĕ çаврăмсемпе, калас тенине çĕнĕлле калама ăнтăлнипе тыткăнлать, пурне те шухăша яракан ыйтусем хускатать.

«...Пĕрре кăна пурнатпăр тĕнчере
Тесе атте-анне килне усратăп:
Çынсен чĕрисене кĕре-кĕре
Хĕвел ăшши пек шанчăк
хăваратăп.
Енчен асапланать пулсан этем,
Ун пурнăçне куççуль касать
пулсассăн,
Ун çĕклемне эп хам çине илем,
Тӳсем—пĕччен—çӳретĕр çын
хаваслăн»

еверлĕ йĕркесене вуласассăн, поэт таса чĕрелле пулнине, вăл вулаканпа пуш параппан çапманнине, унпа чăнчăн юлташ пек чунтан калаçнине, ăна этемлĕх умĕнче тăракан пысăк проблемăсем пăлхантарнине ĕненетĕн.

«Çын çынпа пурăнать.
Çын çынпа савăнать.
Çын!—
Хăватлăн янрать сан яту.
Çын юраттăр çынна;
Хисеплетĕр çынна;
Çын патне эс васка.
Ырă ту».

«Çынна ырă ту» сăвăри çак чĕнӳллĕ йĕркесене темиçе хут вуламасăр иртсе кайма çук. Шухăша яраççĕ вĕсем, ырлăх патне чĕнеççĕ, чуна тасатса ăшăтаççĕ. Сăвва нумайăшĕ ăша хывасси куç кĕретех.

Мĕн çинчен кăна сăмах ан пуçлатăр автор—çыннăн пурнăçри вырăнĕ пирки вулаканпа калаçать-и («Килĕшет мана çак çăвăн ырă кăмалĕ...»), Чăваш çĕршывĕн ӳсĕмĕсемпе савăнать-и («Пурăнатăп Атăл хĕрринче») е чыслăх çинчен çырать-и («Пуррине упрама пĕлейместпĕр»)—пурнăçа философ куçĕпе пăхса сăнлать, гражданлăха тĕпе хума тăрăшать. Кирек мĕнле хайлав валли те тивĕçлĕ форма, хăйне еверлĕ сăрсемпе тĕрлĕ сăнлăхпа пайрăм, виçе шырать автор, темăсене таранăн уçса пырать.

Сăвăсенчен чи ăнăçлисен шутне «Килĕшет мана çак çăвăн ырă кăмалĕ...», «Кун иртнĕçемĕн...», «Çынна ырă ту», «Анне тăпри», «Çĕнтерӳ кунĕ», «Художник, ăнлантар мана...», «Сăмах», «Уйрăлу вальсĕ», «Пуррине упрама пĕлейместпĕр...», «Кĕтсе илекенсем телейлĕ» ятлисене кĕртес кăмăл пулсан, поэмăсенчен вара (вĕсем пурĕ виççĕ: «Кăйкăр», «Юманçар салтакĕ», «Тымар») уйрăмах «Тымара» палăртса хăварас килет.

Çапла. Çĕр çинчи кашни çыннах таса туйăмлă та тӳрĕ кăмăллă, чыслă та пысăк тĕллев-шухăшлă, харсăр та таса чунлă курасшăн поэт. «Пурăнатăп Атăл хĕрринче» кĕнекене вуласа тухсан, çакна чун-чĕрепе туймасăр тăма çук.

**Петĕр ÇАЛКУÇ.**